Çурла уйăхĕн 23-мĕшĕнче Китайра тĕнчен çуллахи Универсиадинче студентсен спорт федерацийĕн /FISU/ ялавне Хусан йышăнчĕ. Авăнăн 19-мĕшĕнче Хусансем Универсиада ялавĕпе Шупашкарта пулчĕç. Хăнасене чукун çул вокзалĕнче “Уяв” ансамбль чăваш халăх юрри-кĕввипе кĕтсе илчĕ.

- Пирĕн тĕллев - Универсиада çĕр-шыв уявĕ пулнине уçса парасси. Кашни регионăн çак шайри спорт ăмăртăвне йĕркелеме шанăç пуррине кăтартасси, - терĕ тĕнчен çуллахи XXVII Универсиадин ĕç тăвакан дирекцийĕн ертӳçи Лариса Сулима.

Хăнасене Шуршăла экскурсие илсе кайрĕç, Андриян Николаев космонавт летчикăн музейĕпе паллаштарчĕç. И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн çĕнĕ корпусĕнче Тутарстанри тата Чăваш Енри студентсен хастар ертӳçисем тĕл пулчĕç, хăйсен ĕç-хĕлĕ пирки каласа кăтартрĕç. Вĕренӳ заведенийĕн тĕп корпусĕнче ЧПУпа тĕнчен çуллахи XXVII Универсиадин ĕç тăвакан дирекцийĕ пĕрле ĕçлесси пирки килĕшĕве алă пусрĕç.

Чăваш Республикин ректорсен Канашĕн председателĕ Всеволод Агаков Универсиада халăхсен туслăхне çирĕплетме пулăшнине, аслă вĕренӳ заведенийĕсен ĕçлĕ çыхăнăвне аталантарнине палăртрĕ. ЧПУна Универсиадăн партнерĕ пулма суйланăшăн тав тунă май сумлă ăмăртăва йĕркелесе ирттерме хастар пулăшма шантарчĕ.

ЧР спорт министрĕ Анатолий Николаев Чăваш Ен çĕр-шывăн пĕрлештернĕ командисене вĕренӳпе хатĕрленӳ ĕçĕсене ирттерме, Хусан çывăхне тренировкăсене килме кăмăл тăвакансене республикăн спорт инфраструктурипе тивĕçтерме хатĕррине пĕлтерчĕ.

Тутарстан вĕренӳ министрĕн пĕрремĕш çумĕ Данил Мустафин республикăсем ĕçлĕ çыхăнусене аталантарсах пырасса шантарчĕ. “Хусан 2013” ĕç тăвакан дирекцийĕн” ертӳçи Лариса Сулима студентсене спорт ăмăртăвĕсенче медальсем çĕнсе илме, Хусанти Универсиадăна пысăк шайра ирттерме волонтерсен йышне кĕме чĕнсе каларĕ.

2013 çулхи Универсиадăна 170 çĕр-шывран 13 пин çын делегацисен йышĕнче килет. Курма килекенсем 50 пине яхăн. Тĕнчери студентсен çитес форумне спортăн 27 тĕсне

кĕртнĕ, вĕсенче Раççей команди медаль ытларах çĕнсе илес шанăç пур.

Тутарсен наци эрешĕнче тюльпанпа анлă усă кураççĕ. Халăхсен хушшинчи туслăха çирĕплетсе ЧПУн çĕнĕ корпусĕ умĕнче чечексен йăранне уçрĕç.

ЧПУн культура керменĕнче Универсиада ялавĕпе паллаштарчĕç. Лариса Сулима Раççей спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ Алина Иванова Универсиадăн Чăваш Республикинчи элчи пуласси пирки пĕлтерчĕ. Китайри ăмăртусенче çĕр-шыв чысне хӳтĕленĕ Чăваш Ен спортсменĕсене хăнасем асăнмалăх парнесем пачĕç. Тĕнчери студентсен спорт форумĕн ялавĕн копине савăнăçлă лару-тăрура Алина Иванова йышăнчĕ. Хусансем “Студентсен çуркунни” конкурсăн юрри-ташшипе савăнтарчĕç, спортсменсем тĕрлĕ турнирта вăй виçрĕç.

Шупашкар хыççăн ялава Йошкор-Ола йышăнĕ. Унтан вăл Мускавра, Питĕрте пулĕ. Эстафета Владивостокра вĕçленĕ.

Татьяна ТИМУКОВА.

**Хыпар. 2011, авăн, 21.**